Суд залĕнчен

# Çын курмасăр пӳрте кĕрсе пуяс терĕм те...

Çапла шутланă пулас 23 çулхи Коля иртнĕ çулхи октябрĕн 27–28-мĕшĕсенче Тренккăра тата Ильинкăра çынсен хушма хуралтисемпе пурăнмалли çурчĕсене кĕрсе пысăк суммăллăхах хатĕрсем вăрласа тухнă чух, анчах...

1984 çулхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче Улатăр районĕнче çуралнă Николай Сергеевич Коноплев иртнĕ кĕр кунне Ильинка тăрăхне хăнана килсен хăйне ют çĕрте хăюллăрах тытма шутланă пулас: 23 çулхи вăй питти каччăн мĕнрен хăраса тăмалли пур-ха? Килте чей чашкине пĕр кашăк сахăр яракан хăнара виççĕ яма та именмест тет-и-ха? Çапла вара тăван тăрăхра япăхпа палăрса тăман, судпа айăпланман, наркологпа психолог патĕнче учетра пулман каччă ют çĕрте хăйне ирĕклĕрех тытма шутланă курăнать, «виçĕ кашăк сахăр шыраса» хайхискер çĕнĕ çĕрти «юлташĕсемпе» килĕшӳ тусах çын харпăрлăхĕнчи пурлăха хăйĕн туса ыттисем умĕнче хăйне пуянрах кăтартма тĕв тăвать. Пуçланать вара йĕркене пăсасси...

Октябрĕн 27-мĕшĕ. Каярахпа «пĕрлехи ĕçшĕн» следстви органĕсем уйрăм уголовнăй ĕç пуçарнă юлташĕпе калаçса татăлса çур çĕр иртни пĕр сехет тĕлĕнче хайхискерсем вăрлас ĕмĕтпе алăк çĕмĕрсе Тренккăри С. Копыловăн хушма хуралтине кĕреççĕ. Хăйсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртсе «каçхи сунарçăсем» пĕр метрĕ 14 тенкĕ тăракан кабеле 30 метр, металл касмалли 1000 тенкĕлĕх «Болгаркăна» уралантараççĕ. Апат тути çинĕ вăхăтра кĕрет теççĕ те, ку хутĕнче те «каçхи сунарçăсемпе» çапла пулса тухать, «ĕçленĕ» май тутă вăй илет: хăйсем ухтарнă малтанхи хуралтăран тухса çын мулĕпе тутă пулас текенскерсем С. Копыловăн туса пĕтереймен тепĕр çуртне форточка витĕр кĕрсе пĕр метрĕ 12 тенкĕ тăракан кабеле татах 30 метр, урамри электричество юпинчен çурт патне пыракан 200 метр тăршшĕ электрокабеле (пĕр метрĕн хакĕ – 25 тенкĕ те 80 пус) йăкăртса тухаççĕ, кил хуçине самантрах 7000 тенкĕлĕх сиен кӳреççĕ.

Каçпа çывăрмасан пуйма çул уçăлнине туйса илнĕскерсем тепĕр кунне каллех маларах калаçса татăлса, анчах ку хутĕнче Ильинка салинчи Р.Васильев хуçалăхне çитеççĕ. Ют пурлăха вăрлас тĕллевпе хайхискерсем Р. Васильевăн пурăнмалли çуртне саккуна пăсса кĕреççĕ те самантрах вăр-вар аллисемпе тухăçлă ĕçлесе пластмасса курупкари ключсен 500 тенкĕлĕх наборне, пластмасса курупкари отверткăсен 200 тенкĕлĕх наборне, 6000 тенкĕ тăракан «Парма» электропăчкăна, 2000 тенкĕлĕх электрорубанока, 4000 тенкĕлĕх электродреле, 2000 тенкĕлĕх сăран атăсене, 300 тенкĕлĕх «Хĕвел» электрообогревателе йăкăртса тухаççĕ, кĕске вăхăтрах Р. Васильева 15 пин тенкĕлĕх сăтăр кӳрсе хăйсем çавăн чуль «пуянланаççĕ». Ĕç тунă темелле. Литературăри пек каласан «Çул уçă. Таганов»... Сăтăр тӳсекенсем вара алă усса ларнă тетĕр-и? Çук. Кун пирки шалти ĕçсен пайне пĕлтерсен йĕрке хуралçисем те шырав ĕçĕсене саккунпа килĕшӳллĕ кĕске вăхăтра ирттерме пултарчĕç: айăплисем çийĕнчех тăрă шыв çине тухрĕç. Н. С. Коноплев хăйĕн айăпне йышăнчĕ, йĕрке пăсакансене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларма пулăшрĕ. Çакна шута илсе тата вăл тунă преступленисем пĕри вăтам йывăрри, тепри йывăррисен шутне лекнине пăхса, хăй ку таранччен судпа айăпланманран, анчах кĕске хушăрах икĕ преступлени тунине тивĕçлипе хакласа, январĕн 20-мĕшĕнче район сучĕ «ыйхă вĕçнипе» аптăракан çамрăка РФ Уголовнăй Кодексĕн 158 статйин 2-мĕш пайĕн «а», «б» пункчĕсемпе икĕ çуллăха, РФ Уголовнăй Кодексĕн 158 статйин 3-мĕш пайĕн «а» пункчĕпе икĕ çул та 6 уйăхлăха, айăплавсене пĕрле хушса РФ Уголовнăй Кодексĕн 69 статйин 3-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн Н. С. Коноплева пурĕ икĕ çул та вунă уйăхлăха ирĕкрен хăтарма тата инкек кӳнĕ çынсене çичĕ пин тата вун пилĕк пин тенкĕ саплаштарттарма йышăнчĕ.

**К. ПЕТРОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Ыйтăр – ответлетпĕр

# Çук патшалăхра пурăнакансем...

**Пирĕн ачасемшĕн Социализмла Совет Республикисен Союзĕ епле çĕршыв пулни аслисем каласа панинчен кăна паллă. Эпĕ шутланă тăрăх паян эпир пурăнакан Раççей Федерацийĕнче те «çав çĕршыв» гражданĕсем пурăнаççĕ. Çакна эпĕ пĕр-икĕ хутчен самай çулсенчи пĕлĕшсем «Эпĕ халĕ те СССР гражданинĕ» тесе СССР гражданинĕн паспорчĕсене кăтартнинчен куртăм-пĕлтĕм. Пĕлес килет, нумай-ши паян районта çук çĕршывра пурăнакан СССР гражданĕсем?**

**И. САВЕЛЬЕВ, Мăн Сĕнтĕр сали.**

***Хаçат вулаканăн интереслĕ ыйтăвĕ çине хурав пама калаçăва Раççей Федерацийĕн Федераллă миграци службин управленийĕн Чăваш Республикинчи Муркаш районĕпе ĕçлекен территори пункчĕн пуçлăхне Зоя Михайловна СОРОКИНАНА чĕнтĕмĕр.***

– Вулакан хускатакан ыйту питĕ интереслĕ те вырăнлă. 17 çул ĕнтĕ СССР çĕршывĕ çук, анчах пирĕн хушăмăрта çав çĕршывăн паспорчĕпех пурăнакансем пурри вырăнти ял тăрăхĕсем ĕçлесе çитерейменнине кăтартать. Тен пирĕн тимсĕрлĕх те пур пулĕ кунта. Халĕ çак çитменлĕхе çывăх вăхăтра пĕтерессипе ĕçлетпĕр.

1997 çултанпа Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспортне эпир пурĕ хамăр районта 34275 патăмăр. Паспорт парас йĕрке пирки çакна каласа хăвараттăп: гражданинăн тĕп документне вăл ыйтнипе пурăнакан вырăнта, вăхăтлăх пурăннă çĕрте паратпăр. Раççей Федерацийĕн гражданинĕн çĕнĕ паспорчĕсене Раççей гражданинĕ 14 çул тултарсан илет пулсан, 20, 45 çул тултарсан, кивелсен, хушамат, ят, ашшĕ ятне улăштарнă чух тата панă паспортра йăнăш çырнисем палăрсан улăштарса паратпăр. Çĕнĕ паспорт парасси Раççейре ялан пурăнакан тĕлĕшпе 10 кун йышăнать пулсан, вăхăтлăх пурăнакана паспорт парасси 2 уйăха тăсăлать.

Айăплавсем пирки каласан çакна пĕлтеретĕп. Улăштармалли вăхăт иртнĕ паспортпа усă курнăшăн, ют çĕршыв гражданĕсем миграци учетне пăснишĕн Раççей Федерацийĕн Федераллă миграци службин управленийĕн Чăваш Республикинчи Муркаш районĕпе ĕçлекен территори пункчĕ иртнĕ çул 500 пин тенкĕлĕх штраф пуçтарчĕ. Каламалла, çак укçа пĕтĕмпех район бюджетне кайрĕ. Кăçал та паспорт режимне пăсакан çынсене саккунпа ответ тыттарнă тĕслĕхсем пĕрре çеç пулмарĕç. Çулталăк пуçланнăранпа пурĕ тĕрлĕ категорири граждансене 65400 тенкĕлĕх явап тыттартăмăр.

Халĕ кĕскен СССР гражданĕсем пирки. Çук çĕршыв гражданинĕн паспорчĕсене улăштарассине паянхи куна Шетмĕпуçĕнчи ял тăрăхĕнче çеç вĕçне çитерме пултарчĕç. Ку ĕçпе ĕçлекен Алена Александрована куншăн тав тăватпăр. Ытти ял тăрăхĕсенче СССР гражданинĕн паспорчĕпе миçе çын пурăннине аяларах пичетленекен таблица калать:

| | |
|---|---|
| Ярапайкасси | 7 |
| Йӳçкасси | 4 |
| Ильинка | 6 |
| Чуманкасси | 5 |
| Катькас | 6 |
| Москакасси | 12 |
| Мăн Сĕнтĕр | 8 |
| Уйкас Янасал | 4 |
| Оринин | 13 |
| Ярославка | 15 |
| Хорнуй | 4 |
| Юнкă | 9 |
| Çатракасси | 7 |
| Муркаш | 7 |
| Турай | 3 |

СССР гражданинĕн паспорчĕсене Раççей Федерацийĕн гражданинĕн тĕп документчĕпе улăштарманнисем хушшинче, тĕпрен илсен, 50 çул тавраш ĕнчи çынсем. Çак списока лекекенсенчен 80 çулхисем пурĕ те 4 çын çеç.

Пахчаçă кĕтесĕ

# *Çурхи пахчара ĕçсем пуçланчĕç*

Çуркунне хăйĕн прависемпе анлăрах та анлăрах усă курма пуçларĕ. Юр ирĕлесси вĕçленсе пырать. Çавна май улмаçырла пахчисенче те ĕç нумайланать. Кăçалхи çуркуннен хăйне евĕрлĕхĕ – тăпрара нӳрĕк сахалли. Çавăнпа та пахчаçăсен улма-çырла йывăççисем тавра нӳрĕк ытларах тытса хăварассипе тимлемелле. Йывăç таврашĕнчи юра кĕлпе е тислĕкпе çӳхен сарса хупламалла.

Юр ирĕлнĕ май йывăççен вуллисем ирĕке тухрĕç. Улма-çырла йывăççисем епле хĕл каçнине тĕрĕслес пулать. Сăнасарах пăхсан, ватă улмуççи вулли хуйăрланса çуркаланнине асăрхама пулать. Ку вăл – сиенлĕ хурт-кăпшанкăсемпе вĕсен çăмартисене упрамалли лайăх вырăн. Çавăнпа та хуйăрланнă вулăсене нӳрĕ çанталăкра хырса тасатмалла та пухăннă çӳп-çапа çийĕнчех çунтармалла. Хуйăртан тасатнă вулăсене 10 литр шывра 300 грамм тимĕр купоросĕ ирĕлтернĕ шĕвекпе сирпĕтмелле.

Иртнĕ уйăхра çимĕç тăвакан йывăççен кирлĕ мар турачĕсене касассине вĕçлеймен пулсан, йывăç сĕткенĕ куçма тытăниччен çак ĕçе хальтерех туса иртерме тăрăшмалла.

Кун тăршшĕ вăрăмланса пынă май хĕвел те хĕртерех пăхать. Улмуççи вуллисем пиççе кайма пултараççĕ. Çавăнпа та хĕвел пĕçертсе сиенлесрен ватă улмуççисен тĕп турачĕсемпе вуллисене çăра извеç ирĕлчĕкĕпе, çамрăк йывăççисене вара пурă шĕвекĕпе шуратмалла.

Йывăç çинче хăвăл пулсан ăна çĕрĕкрен тирпейлĕ тасатмалла. 1-3 процентлă ешĕл сенкер (медный купорос) шĕвекĕпе (1 литр пуçне 10-30 грамм) дезинфекци тумалла. Ун вырăнне 5 процентлă тимĕр купоросĕпе те (1 литр шыв çине 50 грамм) усă курма юрать. Пысăк хăвăла чул тултарса хăйăрпа цемент хутăшĕпе хытарсан та пăсмасть. Пĕчĕк те тарăн хăвăла йывăç пăкăпа асăрханса çапса лартмалла, çиелтен сад варĕпе е çуллă сăрăпа (шурă тĕсли пулсан аванрах) сăрламалла.

Йывăççене имçамлассине йĕркелемелле. Ку тĕлĕшпе çимĕç паракан йывăççене нитрафен шĕвекĕпе (10 литр шыв çине 300 грамм) сирпĕтмелле.

Сырланпа слива, чие йывăççисен хăрнă турачĕсене касмалла. Хурлăхан тĕммисене папкасем кӳпчесе çулçăсем сарăличчен бордос шĕвекĕпе пĕрĕхмелле. Ăна хатĕрлеме 10 литр шыв пуçне ешĕл сенкер 100 грамм тата 100 грамм извеç илмелле.

Çамрăк улмуççи вуллине час-часах шăшисем кăшласа сиенлеççĕ. Çакна асăрхарăр пулсан, кăшт кăна кăшланă вырăна сад маçĕпе сĕрмелле. Енчен те улмуççи вуллине йĕри-тавра кăшланă пулсан, улмуççие «кĕпер» меслетпе сыпса çăлса хăварма май пур.

**А. ШАРИКОВ.**

Ыйту пур. Хуравне пĕлесшĕнччĕ

# *Вăрмана мĕнле йĕркепе касмалла?*

***Ялта пурăнакана пĕрене е вутă тавраш кирлех. Пĕрпĕр хуралтă тумалла-и? Е тата мунча хутма та вутă кирлĕ. Малтан пулсан вăрман касма район администрацийĕн экономика пайĕнчен ордер панă. Ун хыççăн лесничествăра çав ордерпа килĕшӳллĕн вăрман касмалли билет панă.***

***Халĕ вара ку йĕрке улшăннă. Иртнĕ çулхи июлĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Республикин саккунĕ тухрĕ. Унта вăрманти йывăççене туянмалли-сутмалли килĕшӳпе граждансене хăйсене кирлĕ чух вăрманпа усă курмалли тата уйрăм тĕслĕхсенче вутă хатĕрлемелли йĕрке çинчен каланă. Мĕн тумалла паян районта пурăнакансен вутă кирлĕ пулсан? Çакăн çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçинчен Э.И. СИМАКОВАРАН.***

– Асăннă саккун РФ Вăрман кодексĕпе килĕшӳллĕн граждансене хăйсене кирлĕ чух хутса ăшăтма, хуралтăсем тума тата ытти ĕçсем тума вутă хатĕрлемелли йĕркепе нормативсене çирĕплетет. Çапла вара граждансем хăйсене кирлĕ чух вăрманти йывăççене туянмалли-сутмалли договорпа килĕшӳллĕн аукцион ирттермесĕрех, вăрманти çĕр лаптăкне арендăна илмесĕрех вăрманта вутă хатĕрлеме пултараççĕ.

**– Эльвира Иосифовна, сăмаха малалла тăсиччен тӳрех ыйтам-ха: мĕнле тумалла çак вăрман касма ирĕк паракан килĕшĕве?**

– РФ Вăрман кодексĕн 77 статйин 3-мĕш пайĕпе тата халь çеç асăннă Чăваш Республикин саккунĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ иртнĕ çулхи августăн 15-мĕшĕнче граждансене кирлĕ чух вăрманти йывăççене туянмалли-сутмалли килĕшĕве тумалли йĕркене çирĕплетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн çак килĕшĕве Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн вăрман хутшăнăвĕсемпе ĕçлекен уполномоченнăй органĕ – тепĕр майлă каласан, лесхоз тăвать. Килĕшӳ тума чи малтанах граждансен çав уполномоченнăй органа (малалла – лесхоз, тетпĕр) заявлени çырса памалла.

Енчен те вăрман хуралтăсем тума е реконструкцилеме кирлĕ пулсан, заявленипе пĕрле çак документсене тăратмалла: заявлени çыраканăн паспорчĕн е личноçне çирĕплетекен урăх документ копийĕ, çĕр лаптăкне уйăрса панине çирĕплетекен йышăну копийĕ, çавăн пекех çирĕплетнĕ йĕркепе хуралтăна тума ирĕк панин копийĕ: енчен те РФ Градостроительство кодексĕпе килĕшӳллĕн çакнашкал ирĕк пани кирлĕ пулсан.

**– Енчен те вăрман пурăнмалли çурта е унăн пĕр пайне тĕплĕ юсама кирлĕ пулсан, мĕнле документсем кирлĕ пулаççĕ?**

– Кун пек чухне заявленипе пĕрле ăна çыраканăн паспорчĕн е личноçне çирĕплетекен урăх документ копийĕ, пурăнмалли çуртпа е унăн пайĕпе усă курма ирĕк паракан документсен копийĕсем кирлĕ пулаççĕ. Çавăн пекех тĕплĕ юсакан объект е унăн пайĕ мĕнле улшăннине кăтартакан çирĕплетнĕ йĕркепе тĕплĕ юсав вăхăтĕнче панă çурт тума ирĕк паракан документăн копине те тăратмалла, енчен те çав улшăнусем вĕсен çирĕплĕхĕпе хăрушсăрлăхĕн конструктивлă тата ытти характеристикине пырса тивеççĕ тата градостроительство регламенчĕпе çирĕплетнĕ çĕнĕрен тума е реконструкцилеме ирĕк паракан параметрсен чиккисенчен тухса каяççĕ пулсан.

**– Пурăнмалли çурта е унăн пайне, хуралтăсене куллен юсама вăрман кирлĕ пулсан, урăхла документсем тăратмалла-и?**

– Кун пек чухне заявленипе пĕрле ăна çыраканăн паспорчĕн е личноçне çирĕплетекен урăх документчĕн копийĕ, çавăн пекех пурăнмалли çуртпа е унăн пайĕпе усă курма ирĕк паракан документсен копийĕ кирлĕ.

**– Пӳрте е унăн пайне, е унăн ытти пӳлĕмĕсене кăмака хутса ăшăтмалла пулсан?**

– Кун пек чухне те заявлени çыраканăн паспорчĕн е личноçне çирĕплетекен урăх документчĕн копийĕпе пĕрле пурăнмалли çуртпа, унăн пĕр пайĕпе е ытти пӳлĕмĕсемпе усă курма ирĕк паракан документсен копийĕсене тăратмалла.

**– Вăрман кирлĕ çыннăн ыйтăвне тивĕçтерессипе тивĕçтерес маррине мĕн вăхăтра пĕлме пулать?**

– Вăрман касма ирĕк пама ыйтса çырнă заявленисене малтан пăхса тухма лесхоз ятарлă комисси туса хурать, унăн составне тата Положенине çирĕплетет.

Заявленипе пĕрле тăратнă документсене лесхоза панă хыççăн çак комисси 5 календарлă кунта пăхса тухать, хăйĕн йышăнăвне уполномоченнăй органа - лесхоза парать. Лесхоз вара комиссин заключенине илнĕ хыççăн заявленине йышăннă кунран пуçласа 15 календарлă кунтан кая юлмасăр, килĕшӳ тумалли заключенине кăларать.

Килĕшӳ проектне тума йышăнни çинчен гражданина лесхоз çакнашкал йышăну тунă хыççăн 15 кун хушшинче çырса пĕлтерет. Килĕшӳ тума йышăннă заключенире вутă мĕн тума кирлине, килĕшӳ хăçанччен вăйра пулассине, касмалли йывăççем ăçта вырнаçнине, çӳлерех асăннă саккунпа килĕшӳллĕн хăш йывăçа мĕн чухлĕ касса хатĕрлемеллине палăртаççĕ.

Вăрман йывăçĕсене туянмалли-сутмалли килĕшĕве лесхоз хатĕрлет. Унпа пĕрлех йывăççем ăçта ларнин схемине тăвать, вăрман йывăçĕсене панин тата РФ Правительствин 2007 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнчи 406-мĕш номерлĕ «Патшалăх тата муниципаллă харпăрлăхри çĕрсем çинче ӳсекен вăрман йывăçĕсене туянмалли-сутмалли килĕшӳ çинчен» постановленийĕпе çирĕплетнĕ формăсемпе вутă хатĕрлемеллин калăпăшĕн акчĕсене хатĕрлет.

Килĕшĕве çырса икĕ экземпляр тăваççĕ. Лесхоз килĕшӳ тумалли йышăнăва кăларнă хыççăнхи 5 ĕç кунĕ хушшинче икĕ енĕ те алă пусса çирĕплетеççĕ.

**– Ыйтнине тивĕçтермелле мар сăлтавсем те сиксе тухма пултараççĕ пулĕ-ха?**

– Кун пекки те пулма пултарать. Заявленире çӳлерех асăннă Чăваш Республикин саккунĕпе çирĕплетнĕ граждансене усă курма вутă хатĕрлемелли нормативсенчен ытларах вутă хатĕрлеме ыйтса çырнă пулсан, çавăн пекех заявлени панă лесхозра заявленире кăтартнă чухлĕ хатĕрлемелĕх тата тивĕçлĕ пахалăхлă йывăç çук пулсан, заявленине ăна çыракана каялла тавăрса параççĕ.

**– Пирĕн районта пурăнакансем ăçта вăрман касма пултараççĕ?**

– Пирĕн района çак лесхозсем çакăн чухлĕ йывăç фончĕ уйăрса панă: Киря лесхозĕ 400 кубла метр, Йĕпреç лесхозĕ 500 кубла метр, Хĕрлĕ Чутай лесхозĕ 800 кубла метр, Сăнавлă лесхоз 300 кубла метр, Етĕрне лесхозĕ 200 кубла метр, Çĕмĕрле лесхозĕ 3200 кубла метр уйăрать. Çапла вара пирĕн района пĕтĕмпе 5400 кубла метр йывăç уйăрнă халь çеç асăннă лесхозсем.

**– Хаçат вулакансене йывăçа мĕн чухлĕ касма ирĕк пани те кăсăклантарать пулĕ-ха?**

– Граждансене кирлĕ чух вутă хатĕрлемеллин нормативĕсем çакăн пек: çурт, хуралтă тума 100 кубла метр таран пĕр хутчен параççĕ çемьене. Çав калăпăшран çурри лăсăллă, тепĕр çурри çемçе вулăллă йывăççем пулмалла. Çурт-хуралтăсене юсама вара çемьене пĕр хутчен 30 кубла метр таран уйăраççĕ. Кун пек чухне те çав касмалли йывăççенчен çурри лăсăллă йывăççем, тепĕр çурри çемçе вулăллă йывăççем. Хутса ăшăтма вара вутă валли çулталăкне пĕр хут 15 кубла метр таран параççĕ.

Кунта çакна палăртса хăвармалла. Çак халь çеç асăннă вăрман касмалли тапхăр чрезвычайлă лару-тăрăва (çут çанталăк кӳнĕ инкек, пушар т. ыт. те) пула инкек тӳснĕ граждансене пырса тивмест.

**– Эльвира Иосифовна, йывăççене пур çĕрте те тата йĕркипех касма юрамасть пулĕ-ха. Çак йĕркепе кăштах паллаштарсан аванччĕ.**

– Вăрман лаптăкĕсен чиккисенче вăрман касма палăртнă вырăнсенче, тĕслĕхрен, йĕркипех касма юрать. Енчен те мĕнле калăпăшлă, пахалăхлă тата лăсăллă е çулçăллă йывăç кирлине шута илсе вара йывăççене вырăн-вырăнпа суйласа касмалла. Чи малтанах хăрнă, сусăрăннă тата питĕ нумай ларнă йывăççене касма ирĕк параççĕ.

Лесхоз представителĕ гражданин умĕнчех тунă килĕшӳ тăрăх вăрман лаптăкĕн чиккисене е касма палăртнă йывăççене, вĕсене ăçта купаласа хума юранине кăтартать. Çавăн пекех тĕкĕнме юраман, вăрлăхлăх лартнă йывăççен лаптăкĕсене те кăтартать. Йывăça каснă хыççăн тӳрех илсе тухма та юрать.

Йывăç касса хатĕрленĕ хыççăн килĕшӳ вăхăчĕ тухса кайиччен гражданинăн лесхоза пымалла, йывăç каснă вырăна кайса кăтартмалла.

Йывăççене килĕшӳре кăтартнă вăхăтран маларах кассан тата (е) килĕшӳ вăхăчĕ тухнă хыççăн юр çуман тапхăрта лесхоз 20 кун хушшинче çав йывăç каснă вырăнсене пăхса тухса çирĕплетет. Енчен те килĕшӳ вăхăчĕ хĕлле тухнă е вăрмана хĕлле каснă пулсан, çав вырăна юр кайсан пăхса тухса çирĕплетеççĕ.

Вăрман каснă вырăна тишкернĕ чухне йывăççене каснин тата каснă вырăнсене тасатас технологие пăхăннипе пăхăнманнине тĕрĕслеççĕ. Çавăн пекех йывăççене килĕшӳре кăтартнă чухлĕ каснине пăхаççĕ. Йывăç каснин тата вăрман каснин вырăнĕсене пăхса тухнин результачĕсене акт çырса çирĕплетеççĕ. Ун çине йывăç каснă гражданинпа уполномоченнăй орган представителĕ алă пусса çирĕплетеççĕ. Граждансем мĕн чухлĕ йывăç каснине лесхоз контроллесе тăрать, учета илет.

Вăрманти йывăççене туянмалли-сутмалли килĕшӳпе вăрман касмалли хаксене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать.

**– Сăмаха вĕçленĕ май çакăн пирки те ыйтам-ха. Тĕслĕхрен, ял урамĕнчи йывăççене касас пулсан мĕн пĕлмелле?**

– Ялсенчи йывăççене касас пулсан, йывăç касма шутланă çыннăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе йывăç туянмалли-сутмалли килĕшĕве тумалла. Кун пек чухне пĕр кубла метр йывăçшăн тӳлемелли ставкăсемпе усă курмалла.

**– Тавах, Эльвира Иосифовна, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА**
**калаçнă.**